26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
АПРЕЛЬ
25
ВЫРСАРНИКУН
88(6325) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Коммунистсемпе комсомолецсем, çураки ĕçĕсен организаторĕсем пулăр!

Малта пыракан районсенчи колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсене массăллăн акма тытăнчĕç. Колхозлă ялăн ĕççыннийĕсемпе МТС-сен работникĕсем кăçал тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли тырпул, пахча-çимĕç, çĕрулми тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах туса парас шухăшпа кăмăлпа çунса, çураки ĕçĕсене кĕске срокра, пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн мĕнпур вăя хурса кĕрешеççĕ. Çакна малта пыракан колхозсем ака ĕçĕсене тума пысăк хастарлăхпа тытăнни, коммунистсемпе комсомолецсем çураки ĕçĕсен чăн-чăн организаторĕсем пулни, вĕсем тухăçлă ĕçĕн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартни уççăн çирĕплетсе парать.

Первомайски районри «Красное Именево» колхозра комсомолецсем колхозниксен патриотизмлă çĕкленĕвне пуçарса ертсе пыраççĕ. Колхоз çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухнă. Унта уйхир ĕçĕсене лайăхрах организацилеме мĕнпур условисене туса хатĕрленĕ: ĕçпе туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухнă, пĕрлешўллĕ столовăй ĕçлет, колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă, мала тухакан бригадăсене пама куçса çўрекен Хĕрлĕ ялав тата ăмăрту результачĕсене çутатса тăма кăтарту хăмисем тунă. Сухалакансем, сеяльщиксем тата сўрелекенсем пулса комсомолецсем ĕçлеççĕ. Çуракин малтанхи кунĕнчен пуçласах Петр Илюдин ĕç нормине 125 процент, В. Петров 105 процент тултарса пыраççĕ. Шăхасăн районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра çуракине тухнă кунах бригадăсенче стена хаçачĕсем кăларнă. Агитаторсем уйра ĕçлекенсене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, хаçатсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа панă. Ака ĕçĕсене Елчĕк районĕнчи «КИМ» колхоз пысăк çĕкленўпе туса пырать. Унта çуракине кĕске срокра туса ирттерессишĕн кашни колхозник чĕререн тăрăшать. Отечественнăй аслă вăрçăн участникĕсем те Семен Сапроновпа Константин Самарин колхоз производствинче хастарлăн ĕçлеççĕ: «Ылханлă Гитлер аллăма амантрĕ, — тет Самарин юлташ,— анчах ĕçлеме вăй пур-ха. Йĕплĕ пулĕ тăшманшăн эпир акса ўстернĕ тухăçлă тырпулăн кашни пучахĕ».

Ялти коммунистсемпе комсомолецсемшĕн, колхозниксемпе колхозницăсемшĕн халĕ çуракине кăтартуллăн ирттерессинчен кирлĕрех тата ответлăрах задача урăх çук. Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракине халиччен хинчен йывăртарах условисенче ирттерме тивет. Вăрçа пула колхозсенче вăйпитти арçынсем сахалланчĕç, ялхуçалăх ĕçĕсенчи мĕнпур йывăрлăха çамрăксемпе хĕрарăмсен тўссе ирттерес пулать. Уйхир ĕçĕсен ăнăçлăхĕ, пуринчен малтан, колхозниксемпе колхоз руководителĕсем умри йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерме пултарнинчен, ĕçе хăвăрт та тимлĕн туса пынинчен килет. Çакна шута илсе, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем мухтава тивĕç ĕçлеççĕ. Ĕç нормисене ирттерсе тултарасси массăллăн пулса пырать. Анчах тўрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче пирĕн ўрĕк-сўрĕк, ячĕшĕн çеç ĕçлекен, кахалланса е ĕçе пачах тухмасăр пурăнма тăрăшакансем те пур-ха. Партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен, коммунистсемпе комсомолецсен колхоз производствине дезорганизацилекенсене хирĕç кĕрешес пулать.

Ялти ĕç резервĕсемпе туллин усă курни хуçалăхри мĕнпур ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртмелли вăйлă çăлкуçĕ пулса тăрать. Партипе комсомолăн ялсенчи организацийĕсен колхоз руководителĕсене колхозниксем хушшинчи ĕç дисциплинине çирĕплетме пур майсемпе те пулăшмалла.

Пĕлтĕрхи ялхуçалăх ĕçĕсенче социализмлă ăмăрту пысăк вăй пулса тăчĕ. Сталин юлташ чĕнĕвĕ çине ответлесе, республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-сенче ĕçлекенсем фронта вăйлăнрах пулăшса тăрас тĕлĕшпе пуçланнă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Ăмăрту тырпул тухăçлăхне ўстерес, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешес ĕçре республикăна çĕршыври малта пыракан облаçсемпе республикăсен хисеплĕ ретне тăратрĕ. Чăваш республики выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне тата иккĕмĕш премине илчĕ. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен, МТС политотделĕсен кăçал ялхуçалăхĕнче социализмлă ăмăртăва татах та анлăн сарса ямалла, ăмăрту тулашĕнче пĕр бригада та, пĕр звено та, пĕр колхозникпе колхозница та ан юлтăр. Кăçал пирĕн вăйлă тырпул туса илсе, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш премине илессишĕн кĕрешмелле.

Колхозсен уйхирĕсенче ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пырас пулать. Партипе правительство нумай пулмасть 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансене çирĕплетрĕç. Ялти агитаторсемпе вулавçăсен, коммунистсемпе комсомолецсен партипе правительствăн çак постановленийĕсене, Сталин юлташăн докладчĕсемпе приказĕсене колхозниксене витĕмлĕ те уççăн ăнлантарса памалла. Малта пыракансен ĕç опытне стена хаçачĕсемпе кăтарту хăмисем урлă, районсенчи тата республикăри пичет, радио урлă сармалла. Ялти коммунистсемпе комсомолецсен çуракинчи мĕнпур ĕçсен организаторĕсем пулмалла.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Республикăри малта пыракан ялсоветне пама Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне тăвасси çинчен

1. Республикăри малта пыракан ялсоветне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 15.000 тенкĕ преми памалла тăвас.

2. Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн республикăри малта пыракан ялсоветне пама тунă куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавĕ çинчен калакан положение çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕ.

ССР Союзĕн Наркомземĕпе ССР Союзĕн Наркомземĕн Политуправленийĕнче

ССР Союзĕн Наркомземĕпе ССР Союзĕн Наркомземĕн Политуправленийĕ колхозсен выльăх-чĕрлĕхне малалла вăйлăн ĕрчетессишĕн районсем хушшинче пынă 1942 çулхи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă. Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансене ирттерсе тултарас, выльăхсен йышне ўстерес, ялхуçалăх продукчĕсем тата натуроплата памалли обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе палăха тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕ районсене палăртнă.

ССР Союзĕн Наркомземĕпе ССР Союзĕн Наркомземĕн Политуправленийĕ Чăваш республикинчи **Элĕк районне виççĕмĕш преми** пама йышăннă.

ПУЛĂ ТЫТМАЛЛИ УЧАСТОКСЕНЕ ТОРГИПЕ СУТНИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

ВЛАДИВОСТОК, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 20-мĕшĕнче Владивостокра тара илнин срокĕсем 1942 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче тухнă участоксене торгине тăратнă.

Пĕтĕмпе торгине 59 участок тăратнă. Вăл шутран 34 участок халиччен пулă тытакан совет организацийĕсен аллинче, 25 участок Японин пулă промышленникĕсен аллинче пулнă.

Торгире пулă тытакан совет организацийĕсем вĕсем халиччен тытнă 34 участока илнĕ тата 1943 çулччен Японин пулă промышленникĕсен аллинче пулнă 7 участока илнĕ. Японин пулă промышленникĕсем хăйсен аллинче пулнă 25 участокран 18 участока илнĕ.

Совет Союзĕн Маршалĕ Семен Михайлович Буденный
Кăçалхи апрелĕн 25-мĕшĕнче вăл çуралнăранпа 60 çул тултарчĕ.

ВЕЛИКОБРИТАНИН ÇАР МИССИЙĔН ПУÇЛĂХНЕ—МАРТЕЛЬ ГЕНЕРАЛА ГЕНШТАБ НАЧАЛЬНИКĔ МАРШАЛ А. М. ВАСИЛЕВСКИЙ ЙЫШĂННИ

Çак кунсенче Хĕрлĕ Çарăн Генеральный Штабĕн Начальникĕ Маршал А. М. Василевский Великобританин Çар Миссийĕн пуçлăхне Мартель генерал-лейтенанта йышăннă. Калаçу хальхи вăрçă ыйтăвĕсем çинчен пынă.

ПИРĔН САМОЛЕТСЕМ ИНСТЕРБУРГ ХУЛИНЕ ТАПĂННĂ

Апрелĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн 200 самолет Инстербург хулине (Хĕвелтухăç Германия) массăллăн тапăннă. Çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнине пула хулара нумай çĕрте пушарсем тухнă, каярахпа пĕтĕм хулана вут хыпса илнĕ. Нумай вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте, пĕр самолетсăр пуçне, хăйсен базисене таврăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Апрелĕн 23-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн транспортне путарнă.

* * *

Кубань çинче тăшман темиçе хут та атакăланă, анчах вилнисемпе аманнисене шутласан 500 салтакпа офицера çити çухатсан, малтанхи позицисем çинех чакнă. Капитан Сушкин командир пулса ертсе пыракан танкистсем темиçе кун хушшинче нимĕçсен 17 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пирĕн авиаци тата тăшман авиацийĕ малтанхи пекех хастарлăн кĕрешнĕ. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 36 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетсе тăнă, пăшалсемпе пулеметсенчен тата артиллерирен персе тăшманăн сыннисене тата персе тăракан точкисене пĕтерсе пынă. Пĕр участокра нимĕç пехотин батальонĕ çапăçса разведка тума хăтланнă. Тĕрлĕ хĕçпăшалсенчен персе тăнипе нимĕçсен 100 ытла салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, ытти гитлеровецсене сапаласа янă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллери тăшманăн 4 дзотне аркатнă, тĕрлĕ грузсем турттарса пыракан 7 автомашинăна тата 12 лава пĕтерсе тăкнă.

Совет авиацийĕ тăшман аэродромне вăйлăн пырса тапăннă. Пирвайхи хут вĕçсе пырсах пирĕн летчиксем çĕр çинче нимĕçсен 20 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çакăн хыççăн бомбăсем тăкнин результачĕсене пĕлме май пулман, мĕншĕн тесен пушар тухнă пирки çав вырăна çăра тĕтĕм хупăрласа илнĕ. Кунсăр пуçне совет летчикĕсем тăшман тылĕнче чугун çул станцийĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем тиенĕ нимĕç эшелонне пĕтерсе тăкнă.

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче сайра-хутран перкелешсе тăнă. Лейтенант Вагин командир пулса ертсе пыракан подразделенин снайперĕсем юлашки кунсем хушшинче 324 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Разведчик-наблюдатель гварди лейтенанчĕ Волобуев тăшманăн колоннине—30 лава тата 150 нимĕç салтакĕпе офицерне асăрханă. Писарев юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенин артиллерисчĕсем тĕллесе харăссăн темиçе хут персе ярса тăшман колоннине аркатса тăкнă.

* * *

Украина партизанĕсем Н. хулине тăшманăн карательнăй пысăк экспедицийĕ пырса çитни çинчен пĕлнĕ. Партизансен темиçе отрячĕ пĕрлешсе çĕрле çулсене татнă та хулан çурçĕрпе вăтам пайĕсене вăркăнса кĕнĕ. Урам хушшисенче нимĕçсене хирĕç хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Каçалапа нимĕç гарнизонне тата карательсене аркатса тăкнă. Çак операцире совет патриочĕсем 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Вĕлернисем хушшинче нимĕç генералĕ пур тата офицерсем нумай. Çар хатĕрĕсем усракан нумай складсене аркатса тăкнă. 15 пулемет, 3 миномет, 105 автомат, винтовкăсем тата 20.000 патрон тытса илнĕ. Партизансем тĕрмерен гитлеровецсем персе пăрахмалла тунă 20 совет гражданне хăтарнă.

* * *

Нимĕçсен 294-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 513-мĕш полкăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Герберт К. çапла каласа панă: «Манăн чĕре начар пулнипе мана çар службинчен хăтарнăччĕ. 1943 çулхи январьте мана çара илчĕç те кĕтмен çĕртенех маршевăй батальонпа Российăна илсе килчĕç. Батальонĕ питĕ мĕскĕнĕн курăнатчĕ. Унта чĕрепе, туберкулез чирĕпе аптăракан е çурма инвалидсем пухăннă. Пире 294-мĕш дивизие ячĕç. Эпĕ лекнĕ 513-мĕш полкăн 1-мĕш ротинче мĕн пурĕ те 7 салтак çеçчĕ. Вырăссем те пĕр Сталинград тăвасран салтаксем питĕ хăраççĕ вара. Салтаксенчен пĕри мана çапла каларĕ: Эпĕ пигĕ ывăнса çитрĕм, кунтан мĕнле те пулин хăтăласчĕ манăн, терĕ. Май килсенех вара эпир унпа пĕрле тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрсем Калинин облаçĕнчи Боркки ялĕнче тискер ĕçсем туни çинчен сырнă акта пичетлетпĕр: «Боркки ялĕнчен каялла чакса кайнă чухне нимĕç захватчикĕсем пур çуртсене те çунтарса ячĕç. Ялта пĕр çын та юлмарĕ. Боркие пырса кĕнĕ пĕр чаçăн боецĕсемпе командирĕсем кĕл çинче хĕрарăмсен, ачасен тата старриксен 27 виллине тупнă. Урам варринче тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ 4 хĕр вилли выртнă. Ялăн хĕвеланăç хĕрринче çамрăк хĕрарăм виллине тупнă. Унăн пĕтĕм ўчĕ суранлă пулнă, пуçне çапса çурнă тата кăкăрĕсене касса илнĕ. Унпа юнашар пĕр çулхи тата виçĕ çулхи икĕ ача вилли пулнă. Гитлерла тискерсем Боркки ялне ним хăвармиех пĕтерсе тăкнă, ялçыннисене пурне те вĕлерсе пĕтернĕ е çунтарса янă». Акт çине çаксем алă пуснă: лейтенант Р. Степаненко, лейтенант С. Крутеев, старши сержант Т. Кургаев, красноармеец С. Тиркин.

Апрелĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерў

Апрелĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Кубань çинче юлашки кунсенче ăнăççăр атакăсем тунă хыççăн тăшман çынсем тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те пысăк çухатусем тўснĕ. Нумай юн тăкнă гитлеровецсем хастарлă çапăçусем тума хăтланман. Пирĕн артиллери тăшман артиллерийĕн 2 батарейине пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтернĕ.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Пирĕн самолетсем тапăннипе тăшман аэродромĕсем çинче нумай пушарсем тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр çапăçăн артиллерисчĕсем 8 дзота пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн 2 миномет батарейине пусарнă. Пĕр подразделенин снайперĕсем пĕр кун хушшинче 26 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Снайпер Гаврев юлташ 3 гитлеровеца вĕлернĕ, Монаховпа Беляев снайперсем кашниех икшер нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пĕр подразделенин боецĕсем çĕрле тăшман траншейисене пырса кĕрсе, нимĕç пехотин пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă. Виçĕ пулемет, икĕ миномет тата темиçе вуншар винтовкăпа автомат тытса илнĕ. Пирĕн артиллери нимĕçсен боеприпассем тиенĕ 3 автомашинине тата 8 лавне аркатса тăкнă.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕ çине вĕçсе пырса тепĕр хут тапăннă. Вăл аэродрома ĕнер кăна атакăланă пулнă. 25 çĕрте пушар тухнă тата виçĕ вăйлă взрыв пулнă.

* * *

Белгород районĕнче нимĕçсен 30 автоматчикĕ пирĕн войскăсем хушшине кĕрсе кайма хăтланнă. Вĕсене хупăрласа илсе пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет артиллерисчĕсем тăшман пехотин пĕр ротине атакăна сиксе пăрахса, нимĕçсен 40 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пинск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Нимĕçсен 30 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Полесье облаçĕнчи партизансем апрелĕн 7-мĕшĕнче нимĕçсен фронт линийĕ патне каякан çар эшелонне, вăйлăн хуралласа пынăскерне, сирпĕнтернĕ. 5 вагон тата паровоз çĕмĕрĕлнĕ. Хире-хирĕç персе тăнă вăхăтра совет патриочĕсем 45 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 25-мĕш мотодивизийĕнчи 35-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Конрад Шмидт çапла каласа панă: «Март уйăхĕнче пирĕн маршевăй батальон Орела çитрĕ, унта ăна 25-мĕш мотодивизие кĕртрĕç. Сынсене полксем тăрăх валеçесси площадьре, казармăсем умĕнче пулса иртрĕ. Çав вăхăтра вырăс штурмовикĕсем пырса çитрĕç. Вĕсем аялтанах вĕççе батальона пеме пуçларĕç. Маршевăй батальонăн 1-мĕш ротинче 20 çын вилчĕ, 45 çын йывăр аманчĕ тата 15 çын çăмăл аманчĕ. Ытти подразделенисене те çухатусем сахал мар пулчĕç. Малти позицисенче, вăйлă çапăçусем пулман пулин те, пĕр эрне хушшинчех вырăс снайперĕсем пирĕн ротăри 20 салтака пĕтерчĕç. Российăна тухса киличчен эпĕ Берлинра пулса куртăм. Берлинри манăн паллакан çынсем калана тăрăх, Германия часах тата тепĕр хут 1918 çула курĕ, ăна аркатса тăкĕç, тесе шутлаççĕ».

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. СНАЙПЕР МАТВЕЕВ

Боец Матвеев фронтăн малти линийĕнче пĕр уйăх хушши çеç çапăçать-ха. Çапах та вăл хăйĕн пысăк паттăрлăхĕпе ăсталăхне кăтартса панă. Кашни ирех вăл, тул çутăлас умĕн, нимĕçсен оборони сывăхне кайса лайăх пытанса выртать те, оптика приборĕ витĕр нимĕçсем мĕн тунине сăнама тытăнать.

Пĕринче çапла выртнă чухне вăл нимĕçсен дзотне асăрханă. Дзотăн амбразурине нимĕç салтакĕсем марлĕпе витсе маскировка тунă пулнă. Сайра хутран çав марлĕне сирсен хура курăннă, унтан ăна татах витсе хунă. Халĕ ĕнтĕ Матвеев марля тепĕр хут уçăласса кĕтнĕ. Акă марля уçăлнă та Матвеев персе янă. Марля вара урăх хупăнман.

Тепĕр кунне Матвеев нимĕçсен çĕмрĕк танкĕ ăшне кĕрсе ларнă. Фашистсен дзотĕнчен пĕр салтак тухнă кăна, Матвеев ăна персе те ўкернĕ. Тепĕр салтакĕ виле патне чупса пынă, Матвеев ăна та юнашарах выртарнă. Çапла вара çав кун хăюллă снайпер икĕ нимĕçе леш тĕнчене ăсатнă. Çак иртнĕ кĕске вăхăт хушшинче Матвеев ĕнтĕ 17 фашиста шĕкĕлчесе хунă. Командовани çамрăк снайперăн ĕçне хакласа, ăна «За отвагу» медальпе наградăларĕ.

В. Лазарев.

2. ÇУРАКИНЧЕ ФРОНТРИ ПЕК ĔÇЛĔР!

Верховный Главнокомандующи, ССР Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар çирĕм виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ нимĕçсен фашистла çарне хирĕç паттăррăн çапăçать. Кĕркуннепе хĕллехи уйăхсенче Хĕрлĕ Çар совет çĕрĕн анлă талккишĕсене нимĕç оккупанчĕсенчен тасатрĕ. Пирĕн çарăн вăйĕ куллен ўссе пырать.

Хаçатсенчен эпир пирĕн республикăри ĕççыннисем фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйхирĕсенче лайăх ĕçлени çинчен, фронта вăйлăн пулăшса пыни çинчен пĕлсех тăратпăр. Эпир, Чăваш республикинчен килнĕ пĕр чаçри боецсем, хамăрăн тăван республикăри колхозниксемпе колхозницăсене Хĕрлĕ Çара татах та вăйлăнрах пулăшса пыма чĕнетпĕр. Эпир Сталинград патĕнче нимĕçсен çарĕсене çапса аркатрăмăр. Халĕ çавăн хыççăнхи кĕске кану вăхăтĕпе усă курса, тăшмана татах та хытăрах аркатма вĕренетпĕр.

Колхозниксемпе колхозницăсем, кăçалхи çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерме тăрăшăр. Тăван республикăшăн пире кунта, фронтра, ытти тăванлă халăхсен ывăлĕсем умĕнче хĕрелмелле ан пултăр. Партипе правительство кăтартăвĕсене, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырăр, колхозри ĕç дисциплинине татах та ытларах çирĕплетĕр, стахановецсен йышне ўстерĕр.

Аслă çулпуç Сталин юлташ ертсе пынипе, эпир нимĕç захватчикĕсене çапса аркататпăр, киле çĕнтерўпе таврăнатпăр.

И. Корнев, П. Кошкин, В. Анисимов.

Кашни кунах нормăран ирттерсе ĕçлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Ширшов ячĕпе тăракан артелĕн цехĕнче ырми-канми ĕçлеççĕ. Кунта ĕçлекенсен пĕр шухăш—ытларах та ытларах продукци туса кăларасси.

Стахановка Надя Вахлачева март уйăхĕнче ăмăртура пуринчен мала тухрĕ. Вăл кашни кун 3—4 çын туса пымалли ĕçе пурнăçланă. Халĕ те çаплах ĕçлет. Уншăн смена хыççăн юлса ĕçлесси тата киле ĕç илсе каясси яланхи йăлана кĕнĕ.

Тухăçлă ĕçлесен, ĕç укçи те ўсет. Вахлачева юлташ март уйăхĕнче 1.601 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртура кунти кашни рабочипе работница хăйсен ĕç тухăçлăхне ўстернĕ. Мастер Шура Пичугина апрель уйăхĕнче кашни кунах нормăран ирттерсе 65—80 процент чухлĕ продукци туса кăларнă. Бригадир Сидорова юлташ куллен икĕ çыннăн ĕçне тăвать.

Çуракине куллен, большевикла ертсе пымалла!

Япăх вăрлăх акмалла мар!

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелĕн 24-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Районри хăшпĕр колхозсен руководителĕсем ку тарана çитиччченех «Эпир çуракине хатĕр» тесе хăйсене хăйсем лăплантарса пурăнчĕç, халĕ вара, çураки пуçлансан, «вăрлăхсем çитмеççĕ» теме тытăнчĕç.

Пшонкă ялсоветĕнчи «Коммунар» колхозра çураки ĕçĕсем питĕ те начар пуçланчĕç. Колхозăн 11 центнер пăрçа вăрлăхĕ çитмест, вика, чина, тулă вăрлăхĕсем таса мар, кондициллĕ мар. Апла пулсан та колхоз начар вăрлăхсенех акать. Колхоз председателĕ Сидорова юлташ вăрлăх таса маррине малтанах пĕлнĕ, анчах тасаттарма тăрăшман; халĕ тасатса акма май пур пулсан та çак ĕçе организацилеме ÿркенет.

Мартынкасси ялсоветĕнче те ĕçсем çакăн пекех. «Красное знамя» колхозăн акма 5 центнер сĕлĕ, «Красный восток» колхозăн 3 центнер ясмăк çитмест.

Районĕпе илсен 27.737 центнер вăрлăхăн шăтас пахалăхĕсем япăх. Вăрлăхсем таса мар. Нумай колхозсем вăрлăхсем начар — шăтнине пĕлсех акаççĕ.

Типçырма ялсоветĕнчи «Трудовик» колхозăн вика вăрлăхĕ—53 процент, кантăрварри—40 процент çеç шăтать. «Исаково» колхозра (председателĕ Петров юлташ) ясмăк вăрлăхне çĕртсе янă.

Районри 96 колхозран 26-шĕнче вăрлăхсен шăтас пахалăхне пачах тĕрĕслесе пăхман.

ВКП(б) Красноармейски райкомĕ, райсовет исполкомĕ район çуракине çителĕксĕр хатĕрленсе пынине паян çеç мар курнă, анчах кирлĕ мерăсене вăхăтра йышăнман. Колхозсем çуракине хатĕрленнине тĕрĕсленĕ чухне çитменлĕхсем умĕнчен ирте-ирте кайнă. Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Алексеев юлташ та колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнипе вăхăтра интересленмен.

Япăх вăрлăх акни государство умĕнче пысăк преступлени туни пулать. Çакна районри руководительсен, колхоз председателĕсен çирĕп ăнланмалла.

С. Шадин.

Агитацилле-ăнлантарулă ĕç çук çерте

ОКТЯБРЬСКОЕ, апрелĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Маяковский ячĕпе тăракан колхоза эпир кăнтăрла тĕлнелле пырса çитрĕмĕр. Таврари колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсем уйра хĕрсех суха тăваççĕ, анчах Маяковский ячĕпе тăракан колхозра халĕ те ĕçе тухман-ха. Колхоз правленийĕ умĕнче колхозниксемпе колхозницăсем ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса тăнă та темĕн çинчен хытăн калаçаççĕ.

Колхоз руководителĕсемпе бригадирсем ертсе пыманнипе пула колхозниксем кашни кунах [illegible] çапла правлени умĕнче пухăнса тăрса, «çуракине тухмалла-и е иртерех-и» текен ыйту тавра калаçса ирттереççĕ. Колхоз председателĕ Грекова юлташ та çак ыйтăва татса памасть. Вăл колхоз ертсе пырас ĕçре хăйне пĕччен пек тыткалать. Ку колхозра парти организацийĕ пур, комсомолецсем те 15 çын. Аçта вĕсем? Мĕншĕн вĕсем ĕçрен аякра тăраççĕ?

Колхозниксемпе калаçнă хыççăн, эпир колхозра агитацилле-массăллă ĕç пачах çуккине çинчен пĕлтĕмĕр. Агитаторсем хут çинче çеç, ĕçĕ çук. Партоорганизаци секретарĕ Волынова юлташ, коммунистсемпе комсомолецсем çуракине ответлăхне туйса илмен-ха. Çуракине тухас умĕн кунта ВКП(б) райкомĕ ялсенчи вулав çурчĕсем çураки вăхăтĕнче ĕçлеме кирли çинчен çирĕп кăтартусем панă. Анчах Волынова тата колхозри комсомол организацин секретарĕ Кормильцева юлташсем çакăн хыççăн та [illegible] тăвас тесе пĕр утăм та тумаççĕ. Вулав çурчĕ тăтăшах питĕрĕнсе тăрать, унта нимĕнле ĕç те туман. Кĕнекесем нумай, анчах вĕсемпе никам та усă курмасть. Стена хаçачĕ колхозра юлашки хут 1942 çулхи июль уйăхĕнче тухнă. Колхоз хаçатсене чылай çырăнса илет. Анчах хаçатсемпе кунта кирлĕ пек усă курмаççĕ.

Агитацилле-ăнлантарулă ĕçе япăхлатнине пула ĕнтĕ колхоз председателĕ Грекова юлташ та колхозниксемпе колхозницăсене ĕçе йĕркеллĕ тухтараймасть. Колхозра ĕç дисциплини çирĕп мар, [illegible].

Апрелĕн 21—22-мĕшĕсенче тин колхозра çураки ĕçĕсем пуçланчĕç, çак икĕ талăк хушшинче колхозăн 4 бригади мĕнпурĕ те икĕ гектар çĕр сухаланă. Çак вăхăтрах кÿршĕ «Сталь» колхоз 18 гектар сухаланă.

Маяковский ячĕпе тăракан колхозри коммунистсемпе комсомолецсем хăйсен ĕçне тĕпренех улăштармалла. ВКП(б) Октябрьски райкомĕн колхозри коммунистсемпе комсомолецсене агитацилле-массăллă ĕçе тивĕçлĕ организацилеме пулăшмалла.

В. Любимов.

МТС кăçал татах та лайăхрах ĕçлеме пулать

Пирĕн МТС Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура иртнĕ çулхи ĕçсемшĕн иккĕмĕш преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çакăнпа хавхаланса, МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем çак çулта татах та лайăхрах ĕçлеме пулаççĕ. МТС коллективĕ, Елчĕк МТС-пе ăмăртăва тухса, кăçал кашни СТЗ тракторпа 550 гектар, У—2 тракторпа 300 гектар, ЧТЗ тракторпа 1500 гектар сухалама, кашни «Коммунар» комбайнпа 190 гектар тырă вырма, кашни сеялкăпа 220 гектар акма, ĕçĕн хăйне ларакан хакне 12 процент йÿнетме тата горючи 5 процентран кая мар перекетлеме обязательство илчĕ.

Çав обязательствăна пурнăçлас тĕлĕшпе пурĕ 11 трактор бригади тата 88 тракторист пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. ВКП(б) членĕн кандидачĕсем И. Егоровпа И. Макаров ертсе пыракан 10—11-мĕш бригадăсем кăçал СТЗ тракторпа 675 гектар сухаласа, горючие 10 процентран кая мар перекетлеме пулчĕç. Бригадăри трактористсен ĕçлес хастарлăхĕ кăçал пысăк. Акă иртнĕ çул çулталăкри ĕçсен планне 179 процент тултарса, 22 процент горючи перекетленĕ Н. Кузьмина кăçал СТЗ тракторпа 450 гектар сухаласа, 1.000 килограмран кая мар горючи перекетлеме тата трактор çинче хăй пекех аван ĕçлемешкĕн В. Краснова комсомолкăна вĕрентме пулчĕ. 4-мĕш бригадăра ĕçлекен ВКП(б) членĕ, иртнĕ çул аван ĕçленĕшĕн ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине илнĕ Дарья Ермолаева, кăçал та Евдокия Петрова трактористкăпа ăмăртса ĕçлесе, СТЗ тракторпа 500 гектартан кая мар сухаласа 1000 килограмм горючи перекетлессишĕн кĕрешет. Çавăн пекех ытти трактористсемпе трактористкăсем те кăçал иртнĕ çулхинчен тухăçлăрах тата пысăк пахалăхпа ĕçлессишĕн кĕрешĕве тухрĕç.

Иртнĕ çулхи опыт тăрăх, кăçал та эпир хĕрачасен вăйне пысăк вырăна хуратпăр. 1943 çулта пирĕн МТС-ра 68 хĕрача трактористкăсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсене пĕтĕçтерсе, ĕçре хавхалантарса пырас тесе кăçал МТС-ра хĕрачасенчен 3 бригада, комсомолецсемпе çамрăксенчен 2 бригада организациленĕ.

Партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăх организацилени çеç ĕçре çитĕнÿсем тума май парать. Çакна шута илсе вунă бригада çумĕнче партипе комсомол групписем организациленĕ. Çуракине тухнă кунран пуçласа кашни бригадăрах стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тухаççĕ, калаçусемпе хаçат вулавĕсем йĕркеллĕн пулса пыраççĕ.

В. Чернов.
Тăвай МТС политотделĕн начальникĕ.

Трактор бригадисем ĕçе тухрĕ

ÇЕРПУ, апрелĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Апрелĕн 22-мĕшĕнче Синев тата Сафонов юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем уйрăм участоксем çинче суха тума пуçларĕç. «Богатырь» колхозра тракторсемпе 4 гектар сухаланă.

МТС-ăн пур бригадисем те ĕçлемелли колхозсен уйхирĕсене çитнĕ, çуракине пуçăнма хатĕр тăраççĕ.

Спиридонов,
МТС директорĕ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен ĕçне вăйлатмалла

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Комсомолăн шкулсенчи пуçламĕш организацийĕсем районра пурĕ 15 шутланаççĕ. 8 пуçламĕш организацинче 1943 çулта комсомол ретне пĕр çынна та илмен. Ытти 7 организацинче 59 вĕренекене кăна ВЛКСМ членне илнĕ. Районри шкулсенче комсомола кĕме тивĕçлĕ çамрăксем сахал мар. Çĕршер отличниксем пур.

—Комсомола мĕнле майпа кĕмелле? — тесе ыйтаççĕ Шĕкĕрти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем. Вĕсем комсомола кĕмелли анкетăна ăçтан илмеллине тата халĕ ВЛКСМ членне 14 çултан пуçласа илмелли çĕнĕ йĕрке çинчен пĕлмеççĕ.

Çакă вăл шкулсенчи комсомолецсем сÿрĕк ĕçлениннчен килет. Вĕренекенсене обществăллă ĕçе активлăн явăçтармалла, вĕсене кулленвĕрентсе, пулăшса пымалла. Анчах та ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем шкулсенче сахал пулаççĕ.

Комсомолăн Шĕкĕрти туллимар вăтам шкулти пуçламĕш организацийĕнче ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем 1943 çулта пĕр хутчен те пулман. Çавна пула унта комсомол организацийĕн ĕçĕ сÿнсе ларнă. 1943 çулта комсомол ретне пĕр çамрăка та явăçтарман.

ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ В. Иванов Шĕкĕрти туллимар вăтам шкулта çеç мар, ытти шкулсенче те сахал пулать.

Высоковкăри тата Матьшÿри туллимар вăтам шкулсенче комсомол организацисем çук. Кунти çамрăксенчен комсомола кĕрес текенсем нумай.

ВЛКСМ райкомĕ комсомолăн шкулсенчи организацисем мĕнле ĕçленипе кирлĕ пек интересленмест. Иванов юлташ: «Эпĕ вĕсем çинчен нимĕн те пĕлместĕп. Учет заведующийĕнче— Филиппов юлташра статотчетсем пулмалла, мĕнле ĕçленине çав отчетсем тăрăх пĕлме пулать», тет.

В. Веселов.

Комсомол организацийĕсене кашни колхозрах организацилессишĕн кĕрешетпĕр

ВАРМАР. Колхозсенчи тата МТС-ри комсомолецсем çуракине хатĕрленес ĕçе активлăн хутшăнни комсомолăн авторитетне хăпартрĕ. «Çĕнĕ пурнăç» колхозра февраль уйăхĕнче 8 çамрăка комсомол ретне илнĕ, МТС-ра юлашки 3 уйăх хушшинче комсомол ретне 40 çамрăк тракторист кĕнĕ. Комсомол ретне кĕрес текенсем татах та нумай.

Эпир пур колхозсенче те комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене организацилес задача лартрăмăр. Районри 55 колхозран халĕ 51 колхозра пуçламĕш организацисем пур, вĕсенчен виççĕшне 1943 çулта организациленĕ. Паттири «Заря», Кавалти «Маяк» т. ыт. колхозсенчи организацисем 25—30 çынна çитиччен ÿсрĕç.

И. Волков,
МТС политотдел начальникĕн комсомол енĕпе ĕçлекен помощникĕ.

Ачасен художествăллă пултарулăх смотрĕ

Апрелĕн 20-мĕшĕнче Шупашкарта ачасен художествăллă пултарулăх смотрĕ пуçланчĕ. Малтанхи кун хăйсен художествăллă пултарулăхне ачасен Шупашкарти 1-мĕш тата 14-мĕш сачĕсем кăтартрĕç. Ачасен çак сачĕсен руководителĕсем художествăллă пултарулăх смотрне малтанах тимлĕн те тăрăшса хатĕрленнине палăртмалла. Вĕсен выступленийĕсем савăнăçлă та организованно иртрĕç.

Апрелĕн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ вечерта хăйсен художествăллă пултарулăхне Шупашкарти 7-мĕш номерлĕ шкул коллективĕ кăтартрĕ. Ку коллектив смотра тивĕçлĕн хатĕрленсе çитейменни курăнчĕ.

Смотр вĕçленесси инçе-ха. Ытти коллективсем çав вăхăтпа усă курса асăннă çитменлĕхсене пĕтерме пултараççĕ.

М. Ильин.

Испытанисене хатĕрленеççĕ

Канашри педагогика училищинче пĕлÿ тĕрĕслевĕсене хатĕрленме тытăнчĕç. Вĕреннĕ материала тĕплĕн ăнланса илме май парас тесе, начар вĕренекен ачасем çумне отлично вĕренекеннисене çирĕплетнĕ. Вĕсем начар вĕренекенсене пулăшма тытăнчĕç те ĕнтĕ. Пĕрремĕш «В» класра вĕренекен В. Петухова ыйтусене яланах тĕплĕн ăнлантарса парать. Çавăнпа ăна вĕренекенсем юратаççĕ. Пĕрремĕш классенче «Этем анатомийĕпе физиологийĕ» предметпа вĕреннине çирĕплетмелли уроксем апрелĕн 14-мĕшĕ тĕлне 5 сехет пулса иртнĕ. Çавăн пек уроксем арифметика, тăван чĕлхе тата ытти предметсемпе те пулса пыраççĕ.

И. М.

Ют çĕршывсенче

Тунисри вăрçă ĕçĕсем

АЛЖИР, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Фронтăн кăнтăрхĕвеланăç участокĕнче Туниспа Бизерта çине наступлени тумалли виçĕ направлени палăрса тăраççĕ. Наступлени пуçласа ямалли пунктсем çаксем пулаççĕ: Пон-Дю-Фас, Меджез-Эль-Баб тата Беджа районĕсем. Çакăнтан вара Туниспа Биз[illegible]на чи кĕске те чи лайăх çулсем каяççĕ. Çурçĕр-хĕвелтухăçнелле каякан шоссе тата ахаль çулсем виçĕ юханшыв улăхĕсем тăрăх пыраççĕ. Вăл шывсем çаксем: Милиана, Меджерда тата Джоамин. Кунта çĕмрен пек тÿрĕ авалхи çулсем упранса юлнă.

Пон-Дю-Фас патне пымалли çулсене тăшман аллинчи Фирине-Бекр-Мансур сăрт-ту районĕ хупласа тăрать. Сăртсен çÿллĕшĕ пин метртан ытла мар. Нумаях пулмасть вăл районта хаяррăн çапăçнă хыççăн француз чаçĕсене хĕссе, нимĕçсем хăшпĕр высотасене йышăнса илме пултарнă. Юлашки вăхăтра артиллерипе танксем хушса вăйлăлатнă француз чаçĕсем хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тавăрас шутпа наступленилле çапăçусем туса пыраççĕ. Тактика тĕлĕшпе пăллă высотасем аларан алла куçса пыраççĕ. Французсем сăрт-ту районĕнче çапăçма пит лайăх хăнăхса çитрĕç. Техника çителĕксĕр пулни кунта питех палăрмасть, техника çитменнине вак группăсем хастарлăн тата хăюллăн кĕрешнине саплаççĕ.

Фирине-Бекр-Мансур сăр-ту массивне йышăнса илни Мирнана юханшыв улăхĕ тăрăх каякан Тунис çулĕпе çÿреме май парать. Меджез-Эл-Баб союзниксен аллинче, анчах Тебурба çулне тăшман аллинче тăракан Джебель-Эль-Анг сăрт хырçи питĕрсе лартнă. Чи çÿллĕ вырăнта вăл хырçă 660 метра çитет. Темиçе кун хушши ĕнтĕ англичансен пĕрремĕш армин соединенийĕсенчен пĕри Меджез-Эль-Баб—Тебурба-Беджа çулне контрольлекен высотасене йышăнса илессишĕн кĕрешет. Матер çулне контрольлекен 717-мĕш высоташăн хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Çапла вара пĕрремĕш армин фронтĕнче пĕр чарăнмасăрах вырăнти çапăçусем пулса пыраççĕ.

Кунта пуринчен ытла пехота çапăçать, мĕншĕн тесен танксемпе тата артиллерипе туллин усă курма май çук.

Çапăçусем пуринчен ытла çĕрле пулса пыраççĕ. Тăшман, сăрт-ту вырăнĕпе усă курса, оборонăн уйрăм узелĕсене тăвать. Фронтăн хĕвеланăç участокĕнчи вăтам секторĕнче нимĕç чаçĕсем тăраççĕ. Вĕсем хушшинче—парашют чаçĕсем пулнăскерсем, 334-мĕш дивизи, 47-мĕш батальон тата нимĕçсен тепĕр дивизийĕн чаçĕсем пур. Тăшман хирĕç тăрса çапăçни вăл эвакуаци тăвас шухăша пăрахнине пĕлтермест. Тăшман транспорчĕ тинĕс хĕрригетле куçни палăрать. Союзниксен чаçĕсем талкăшпех тăшман фронтне хирĕç тăрса тухнă. Çавăн пек талкăшпех тăнипе тăшман хăйĕн шухăшĕсене пытарма тата хăйĕн шухăшĕсене пурнăçлама хăтланать. Союзниксен наступленийĕ вăл плансене пурнăçлассине пăрахăça кăларĕ.

РУМЫНИРЕ ВЕНГРИЕ ХИРĔÇЛЕ ПРОПАГАНДА ТĂВАÇÇĔ.

СТАМБУЛ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни шкулĕсемпе аслă шкулĕсенче Венгрие хирĕç пропаганда питĕ вирлĕн пырать. Гимназисемпе университетсенчи вечерсенче хăй вăхăтĕнче Çурçĕр Трансильванирен тухса кайнă çынсем Венгрие хирĕçле сăмахсем калаççĕ. Çавăн пек пухусенчен пĕри Венгрие хирĕçле демонстраци пулса кайнă.

«Порунка Времий» ятлă румын хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Румыни влаçĕсем Çурçĕр Трансильванирен тарса тухнă пур çынсене те шута илсе çырса тухаççĕ. Хĕçпăшал тытма юрăхлă арçынсене, Венгрие хирĕçле шухăш-кăмăллисене уйрăмăн шута илеççĕ.

ЯПОНЕЦСЕМ АМЕРИКАН ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ЛЕТЧИКĔСЕНЕ ВĔЛЕРНИ ÇИНЧЕН РУЗВЕЛЬТ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт Рузвельтăн çак заявленине пичетлесе кăларнă:

«Пĕтĕм чунтан-чĕререн тарăхса (манпа пĕрле цивилизациллĕ мĕнпур халăхсем тарăхĕç тесе шутлатăп), эпĕ çакăн çинчен пĕлтеретĕп: çапăçусем пынă вăхăтра Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсенчен японецсен аллине тыткăна лекнĕ хăшпĕр çынсене Япони правительстви варварла асаплантарса вĕлернĕ. Америка авиацийĕ пĕр çулталăк каялла Япони çине бомбăсем пăрахни çинчен Америка пичечĕ нумаях пулмасть тĕплĕнтерех пĕлтерчĕ. Ун чухне японецсем Америкăн икĕ бомбардировщикĕн командисене тыткăна илнĕ. Çав американецсене тыткăна илни çинчен, вĕсене суда пани çинчен тата хаяррăн асаплантарни çинчен Америка правительстви Японири радио пĕлтернĕ тăрăх 1942 çулхи октябрĕн 19-мĕшĕнче пĕлчĕ. Ун хыççăн вара çав хыпарсем тĕрĕс иккенне кăтартса паракан пĕлтерÿсене илме тăрăшнă.

Мартăн 12-мĕшĕнче Америка правительстви Япони правительствинчен пĕлтерÿ илчĕ. Унта çав американецсене суда парса вĕсене вĕлермелле туни çинчен каланă. Пĕлтерÿре малалла çапла каланă: вĕлермелли приговорсене хăшпĕр американецсем тĕлĕшпе çемçетнĕ, ытти американецсем тĕлĕшпе вĕсене пурнăçа кĕртнĕ, тенĕ. Америка правительстви Япони правительствине янă официальнăй пĕлтерÿре çав варварла ĕçе татăклăн сивлерĕ. Вăл Япони правительствине çапла каларĕ: çав шуйттанла преступленисемшĕн личнăй тата официальнăй ответлăха Америка правительстви Япони правительствин вăл ĕçе хутшăннă çыннисем çине хурать, çав çынсене вăл вăхăт çитсен правосуди аллине парĕ, терĕ. Пирĕн тăшман çавăн пек террорла ĕçсем туни варварство пулса тăрать. Японин çар пуçлăхĕсем пире çавăн пек хăратма хăтланни пĕтĕмпех ăнăçсăр пулĕ. Ун пек тума хăтланни вăл Японин çавăн пек ирсĕр милитаризмне пĕтерсе тăкмашкăн Америка халăхне нихăçанхинчен те ытларах хастарлăх парĕ. Эпĕ государственнăй департамента пирĕн Япони правительствине янă пĕлтерĕве пичетлеме каларăм».

Государственнăй департамент Америка правительстви Япони правительствине янă нотăна пичетлесе кăларнă.

Пĕлтерÿ

Апрелĕн 26-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) агитаторсемпе пропагандистсем тата докладчиксем валли **«Гитлерла ирсĕрсем хăйсене таврасран хăтăлаймĕç»** ятлă темăпа лекци пулать.

Лекцие ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ **Шапиро** юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Пичет кунĕ умĕн

КАЛИНИНО. Асакассинчи тулли мар вăтам шкулта пичет кунне кĕтсе илме хатĕрленнĕ май унта стена хаçачĕсене вăхăтра тата лайăх кăларса пыма тăрăшаççĕ. «Линкор» стена хаçачĕ (редакторĕ Мальцев) хаçата çырса тăракансен йышне ÿстерчĕ. Хаçат вĕренÿ пахалăхне, дисциплинăна ÿстерме пулăшать, вĕсем çинчен [illegible] калать. Пичет кунĕ ячĕпе пулса иртекен стена хаçачĕсен выставкине «Линкор» хаçат малти вырăна йышăнассăн [illegible].

Т. Степанов.

Илемлĕ литература кĕнекисем пухаççĕ

Районри шкулсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли илемлĕ литература кĕнекисем пухасси аван пулса пырать. Канашри педучилище вĕренекенĕсем 60 кĕнеке ытла пухрĕ. Ку ĕçре уйрăмах виççĕмĕш класра вĕренекенсем тăрăшса ĕçлерĕç. Кĕнекесем пухасси пуçламăш шкулсенче те малалла пырать. Вăтакас Татмăшри туллимар вăтам шкулта та кĕске вăхăт хушшинче 100 кĕнеке ытла пухнă.

И. Максимов.

Çĕмĕрле районĕнче вулав çурчĕсен ĕçне хакламаççĕ

Вулав çурчĕ колхозăн ялан культура центрĕ пулса тăрать. Ун урлă пин ĕçсыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пымалла.

Анчах çакна Çĕмĕрле районĕнчи вулав çурчĕсене ĕçлекенсем кирлĕ пек ăнланмаççĕ. Паянхи куна 17 вулав çурчĕнчен пĕри те ĕçлесе пымасть темелле. Анат Кăмашăри вулав çурчĕсем пусне, [illegible]. Чылай çуртсем хупă тăраççĕ е заведующийĕсем çук, е унта кивĕ [illegible].

Таваны вулав çуртне илер. [illegible]

Егоркинăра мирлĕ вăхăтра вулав çурчĕ лайăх ĕçлетчĕ. [illegible]

[illegible] вулав çурчĕсен ĕçĕсемпе интересленмеççĕ, кирлĕ пулăшу памаççĕ. Мĕншĕн-ха, сăмахран, Тăван ялсоветĕн хăйĕн вулав çуртне лайăх ĕçлекен тумалла мар? Ялсовет исполкомĕн председателĕ, вăлах ВЛКСМ организацин секретарĕ Григорьева ун çинчен шутламасть те. Вăл: «манăн вулав çурчĕсĕр те ĕç нумай», тет.

Егоркинăра, комсомол организацисĕр пуçне, коммунистсем те пур. Анчах вĕсем вулав çурчĕн ĕçĕпе интересленмеççĕ. Тепĕр чухне политикăллă-массăллă ĕç çинчен калаçса илеççĕ, анчах ун чухне те вулав çуртне аса илмеççĕ.

Вулав çурчĕсен ĕçĕпе партипе комсомол райкомĕсем те сахал интересленеççĕ.

Колхозсенче уйхир ĕçĕсем пуçланчĕç. Политикăллă-массăллă тата культурăллă ĕçсене уйра ĕçлекенсем хушшинче туса пымалла. Ку ĕçре вулав çурчĕсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Çĕмĕрле районĕнчи вулав çурчĕсем çураки вăхăтĕнче ĕçлеме план туман. Ку таринччен избачсене пухса та каламан. Мускав облаçĕнчи политпросвет работникĕсем чĕнсе каланине паян кунччченех сÿтсе явман.

Х. Лисин.

ССР Пиравăр Халăх Комиссариачĕн „Энерготрансучтекстилĕн“ Шупашкарти филиалĕ шоферсен курсĕ валли авто ĕçĕ çинчен вĕрентме преподавательсем хатĕрлекен курса вĕренме илет. Курсра тÿлевсĕрех вĕрентеççĕ.

Вĕрентессе 4 уйăх хушши, кăнтăрла вĕрентеççĕ.

Курса вăтам шкул пĕтернисене, арçынсене те хĕрарăмсене те илеççĕ. Авто ĕçĕпе паллашнисем пулсан аван.

Курсантсене уйăхра 350 тенкĕ стипенди параççĕ, кунне икĕ хут вĕри апат çитереççĕ, общежити параççĕ.

Заявленисене майăн 10-мĕшĕччен илеççĕ, занятисем майăн 10-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Заявленисене çакăн пек документсемпе пĕрле филиал директорĕ ячĕпе ямалла: 1) вĕреннине ĕнентерекен свидетельство; 2) автобиографи тата 3) çарапуçăн ÿкернĕ 4 фотокарточка.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, К. Либкнехт урамĕ, 14. Телефон 6—93. Канмалли кунсемсĕр пуçне, кашни кунах, 9 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

Шоферсем хатĕрлекен курса вĕренме илеççĕ. Занятисем майăн 1-мĕшĕнчен пуçланаççĕ, вĕренессе пĕр уйăх çура вĕрентеççĕ.

Курса 17 çултан кĕçĕн мар арçынсемпе хĕрарăмсене (вăл шутрах 1926 çулхи июнь уйăхĕнчен кая мар çуралнисене те) илеççĕ.

Вĕренекенсене уйăхне 150 тенкĕ стипенди параççĕ, апат çитереççĕ.

Кĕрес текенсен хăйсен çак адреспа кайса ыйтса пĕлмелле:

Шупашкар, Калинин урамĕ, 51, кадрсен пайĕ.

Колхозниксен вĕсене колхозри ĕçрен хăтарни çинчен справка тăратмалла.

„Текстильстрой“ тресчĕн Шупашкарти 3-мĕш номерлĕ строительнăй конторине çакăн пек работниксем васкавлăн кирлĕ: платниксем, столярсем, каменщиксем, штукатурсем, малярсем, çĕр чавакансем, слесарьсем, водопроводчиксем, котельщиксем тата чернорабочисем.

Рабочисем валли столовăй пур, пĕччен çынсене общежити параççĕ.

Кадрсен пайĕнчен çак адреспа ыйтса пĕлмелле:

Шупашкар, Ленин урамĕ, 64. Телефон № 2—98.

Колхоз председателĕсемпе счетоводсене пĕлсе тăма

Колхоз счетоводствин формисен иккĕмĕш черетпе ярса памалли пайне икĕ пая уйăратпăр.

Иккĕмĕш черетри пĕрремĕш пайне ĕçкунĕсен учечĕпе çыхăнса тăракан пур формăсем те кĕреççĕ.

1943 çулхи майăн 5-мĕшĕнчен пуçласа яма тытăнатпăр.

Бланкоиздательствăн Горький сывăхĕнчи облаçсен контори.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбиначĕ лартмашкăн улмуççи, хурлăхан тата хăмлаçырли йывăççисем кирек мĕн чухлĕ сутать.

Шупашкар Горкомхозĕ автомашинăсем, моторнăй лодкăсем, мотоциклетсем, велосипедсем, лодкăсем, яликсем, лашасем, ĕнесем, пушмак пăрусем тытакан пур граждансене те 10 кун хушшинче вĕсене Горкомхозра (К. Маркс урамĕ, 4-мĕш номерлĕ çурт) регистрацилесе тивĕçлĕ документсем илме хушать.

Шупашкар хулинчи выльăх тытакан çынсене çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: Килти выльăха урама кăларса яма юрамасть; выльăха урамра тытас пулсан, çакăн чухлĕ штраф тÿлеттереççĕ: лашашăн—50 тенкĕ, ĕнешĕн—50 тенкĕ, качакашăн—25 тенкĕ, сыснашăн—40 тенкĕ.

Выльăхсене Р. Люксембург урамĕнчи 12-мĕш номерлĕ çурт килкартине хăваласа хупаççĕ.

Горкомхоз.

Завхоз тата уборщица васкавлăн кирлĕ. Столовăй пур. Условисем килĕшнĕ тăрăх.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамĕ, 11. Центроэлектромонтажăн 6-мĕш номерлĕ уйрăм участокĕ.

Килкартинчен икĕ лаша тухса кайнă: пĕри çÿрен лаша, тепри сарă кĕсре, çамки хушка.

Вĕсем ăçтине пĕлекенсене Шупашкарти Резинзавода пĕлтерме ыйтатпăр. Телефон 5—29.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 331

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.